Кашни ҫыннăн хăйĕн хуҫалăхĕнче яланах тимлĕ те асăрхануллă пулмалла. Пушар хăрушсăрлăхĕн йĕркисене ҫирĕп пăхăнмалла! Унсăрăн вут-ҫулăм ытамне кĕрсе ӳкме те пулать, темиҫе ҫул ĕҫлесе пухнă пурлăх, кил-ҫурт, хуралтăсем тĕпĕ-йĕрĕпех ҫунса каяҫҫĕ.

Пушар хăрушсăрлăх йĕркесем тăрăх пĕтĕм кăмака мăрьесене хĕрлĕ кирпĕчрен кăна тума юрать, йывăҫ мачча хăмисем витĕр тухнă вырăнта мăрьесен пĕр енĕн хулăннăшĕ 25 сантиметртан сахал мар пулмалла тата вĕсене вăхăтрах тĕрĕслесе, хăрăмран тасатса, юсаса тăмалла, маччара тăмпа хăйăрлă растворпа сăтăрса шуратсах тăмалла. Вутă ҫуннă чухне кăмака алăкне тачă хупса хумалла. Хутăнакан кăмака умĕнчи ҫунакан урайне 70 х 50 сантиметртан кая мар шăвăҫ ҫапмалла. Кăмакапа стена хушшинче ятарлă хушă пулмалла, стенана ҫунман материалсемпе хутелемелле.

Хутăнакан кăмакана яланах пăхса тăмалла, пĕчĕк ачасене хутнă кăмакана пăхса тăма хушмалла мар. Хисеплĕ кил-хуҫисем! Хăвăр хуҫалăха малашне те упраса тата лайăхлатса пырас тесессĕн пушар хăрушсăрлăхĕн йĕркисене ҫирĕп пăхăнмалла!




Вут-ҫулăм алхаснине асăрхасан пушар сӳнтерекенсем патне «01» : «112» : «101» шăнкăравлăр!